# Çĕнтерÿ ялавĕ

Муркаш район хаçачĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнчене тухать

85 (7402) № ✻ Юн кун, 2006 çулхи октябрĕн (юпа) 11-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ


## Октябрĕн 8-мĕшĕнче Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутачĕсен суйлавĕ иртрĕ



**Республика Патшалăх Канашĕн депутачĕсен суйлавне Çатракасси суйлав участокĕнчи суйлавçăсем те активлă хутшăнчĕç.**

**Сăн ÿкерчĕкре: суйлав участокĕн членĕсем ĕçре.**

**В. ШАПОШНИКОВ сăн ÿкерчĕкĕ.**

**ХИСЕПЛĔ ЕНТЕШĔМĔРСЕМ!**

Иртнĕ вырсарни кун пуриншĕн те пирĕншĕн паллă та яваплă кун пулчĕ. Чăваш Республикинче Патшалăх Канашĕн депутачĕсен суйлавĕ иртрĕ. Пирĕн районти суйлавçăсен списокне кĕртнĕ суйлавçăсенчен çурри ытла суйлава хутшăнчĕ, хăй килĕштернĕ партипе кандидатшăн сасăларĕ. Сирĕн çак утăмăрта эсир тăван район, республика пуласлăхĕшĕн çунса тăни, хамăр пурнăçа лайăхлатассишĕн тăрăшни, общество пурнăçĕнчен айккинче тăманни яр уççăн курăнать. Тавах сире çакăншăн.

Патшалăх хăйĕн çыннисемпе пуян. Суйлав пĕтĕмлетĕвĕ вара, хаклă суйлавçăсем, эсир, паянхи лару-тăрăва ăнланса, тĕрĕс утăм тунине кăтартса парать. Татăклă самантра эсир тивĕçлĕ йышăну тума пултарнине те. Малашне те пĕр-пĕрне ăнланса, хамăр пурнăç хамăртанах килнине ăша хывса вăй хурасса шанатăп. Пурне те çирĕп сывлăх, ĕçре ăнăçу, çемьере килĕшÿ сунатăп.

**Район пуçлăхĕ Ю.А. ИВАНОВ.**

Муркаш районĕнчи суйлавçăсене, иртнĕ суйлавра хăйсен сассисене маншăн панисене, чĕререн тав сăмахĕ калатăп, ырлăх-сывлăх, телей, ăнăçусем сунатăп.

**ЧР Патшалăх Канашне депутата суйлама тăратнă кандидат Е.Н. АНДРЕЕВ.**

## 2006 ÇУЛХИ ОКТЯБРĔН 8-МĔШĔНЧЕ ПĔР МАНДАТЛĂ 8 № МУРКАШ СУЙЛАВ ОКРУГĔПЕ ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ТĂВАТТĂМĔШ СУЙЛАВРИ ПАТШАЛĂХ КАНАШĔН ДЕПУТАТНЕ СУЙЛАНИН ИТОГĔСЕМ

***Кандидатсемшĕн пĕр мандатлă 8 № Муркаш суйлав округĕпе сасăланин кăтартăвĕсем çапла:***

Списока кĕртнĕ суйлавçăсем – 42440.

Участоксенчи суйлав комиссийĕсем илнĕ бюллетеньсем – 44000.

Сасăлав кунĕнче суйлавçăсене сасăлав иртрермелли пÿлĕмсенче бюллетеньсем панă – 18787.

Сасăлав кунĕнче суйлавçăсене сасăлав иртрермелли пÿлĕм тулашĕнче бюллетеньсем панă – 4201.

Усă курман (погашенные) бюллетеньсем – 21012.

Илсе çÿремелли сасăлав ещĕкĕсенчи бюллетеньсем – 4201.

Стационарлă сасăлав ещĕкĕсенчи бюллетеньсем – 18783.

Юрăхсăр тесе палăртнă бюллетеньсем – 733.

Юрăхлă бюллетеньсем – 22251.

Участоксенчи суйлав комиссийĕсем открепительнăй удостоверенисем илнĕ – 1100.

Участоксенчи суйлав комиссийĕсем суйлав кунĕнчен маларах суйлавçăсене открепительнăй удостоверенисем панă – 332.

Суйлавçăсем суйлав участокĕсенче открепительнăй удостоверенисемпе сасăланă – 109.

Усă курман (погашенные) открепительнăй удостоверенисем – 768.

Çухатнă удостоверенисем – 0.

Илнĕ чухне шута илмен бюллетеньсем – 0.

**Суйлав бюллетенне кĕртнĕ регистрациленĕ кандидатсем тата вĕсем сасă пухнă:**

Андреев Евгений Николаевич – 4022.

Анисимов Владимир Ильич – 2848.

Гордеев Владимир Алексеевич – 569.

Давыдов Александр Платонович – 3354.

**Данилов Владислав Григорьевич – 9538.**

Сергеев Валерий Николаевич – 1043.

Фирсов Владимир Петрович – 299.

Пур кандидатсене те хирĕç сасăланă – 578.

Чăваш Республикин «Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутачĕсене суйласси çинчен» 68 статйипе килĕшÿллĕн сасăлава хутшăннă суйлавçăсен чи нумай сассине пухнă май **Владислав Григорьевич Данилов** пĕр мандатлă 8 № Муркаш суйлав округĕпе Чăваш Республикин тăваттăмĕш суйлаври Патшалăх Канашĕн депутатне суйланнă тесе йышăннă.

## ХУШМА СУЙЛАВ ИТОГĔСЕМ

***Кандидатсен списокĕсене регистрациленĕ суйлав пĕрлешĕвĕсемшĕн сасăланин итогĕсем çапла:***

Списока кĕртнĕ суйлавçăсем – 42451.

Участоксенчи суйлав комиссийĕсем илнĕ бюллетеньсем – 44000.

Сасăлав кунĕнче суйлавçăсене сасăлав иртрермелли пÿлĕмсенче бюллетеньсем панă – 18815.

Сасăлав кунĕнче суйлавçăсене сасăлав иртрермелли пÿлĕм тулашĕнче бюллетеньсем панă – 4201.

Усă курман (погашенные) бюллетеньсем – 20984.

Илсе çÿремелли сасăлав ещĕкĕсенчи бюллетеньсем – 4201.

Стационарлă сасăлав ещĕкĕсенчи бюллетеньсем – 18812.

Юрăхсăр тесе палăртнă бюллетеньсем – 1159.

Юрăхлă бюллетеньсем – 21854.

Участоксенчи суйлав комиссийĕсем открепительнăй удостоверенисем илнĕ – 1100.

Участоксенчи суйлав комиссийĕсем суйлав кунĕнчен маларах суйлавçăсене открепительнăй удостоверенисем панă – 332.

Суйлавçăсем суйлав участокĕсенче открепительнăй удостоверенисемпе сасăланă – 134.

Усă курман (погашенные) открепительнăй удостоверенисем – 768.

Çухатнă удостоверенисем – 0.

Илнĕ чухне шута илмен бюллетеньсем – 0.

**Кандидатсен списокĕсене регистрациленĕ суйлав пĕрлешĕвĕсем тата вĕсем сасă пухнă:**

**«Единая Россия» политика партийĕн Чăваш регион уйрăмĕ – 13214.**

ЛДПР политика партийĕн Чăваш регион уйрăмĕ – 2094.

«РОДИНА» партин Чăваш Республикинчи регион уйрăмĕ – 1104.

КПРФ Чăваш Республикинчи уйрăмĕ – 4160.

«ПАТРИОТЫ РОССИИ» политика партийĕн Чăваш регион уйрăмĕ – 707.

Кандидатсен пур списокĕсене те хирĕç сасăланă – 575.

---

## 2006 ÇУЛХИ ОКТЯБРĔН 8-МĔШĔНЧЕ ДЕПУТАТСЕН МУРКАШ РАЙОН ПУХĂВĔН ДЕПУТАТНЕ СУЙЛАССИПЕ ХУШМА СУЙЛАВ ИРТТЕРНИН ИТОГĔСЕМ

***Пĕр мандатлă 16 № Очăкасси суйлав округĕпе депутатсен Муркаш район Пухăвĕн депутатне суйланин кăтартăвĕсем çапла:***

Списока кĕртнĕ суйлавçăсем – 1024.

Участоксенчи суйлав комиссийĕсем илнĕ бюллетеньсем – 1100.

Сасăлав кунĕнче суйлавçăсене сасăлав иртрермелли пÿлĕмсенче бюллетеньсем панă – 377.

Сасăлав кунĕнче суйлавçăсене сасăлав иртрермелли пÿлĕм тулашĕнче бюллетеньсем панă – 133.

Усă курман (погашенные) бюллетеньсем – 590.

Илсе çÿремелли сасăлав ещĕкĕсенчи бюллетеньсем – 133.

Стационарлă сасăлав ещĕкĕсенчи бюллетеньсем – 377.

Юрăхсăр тесе палăртнă бюллетеньсем – 35.

Юрăхлă бюллетеньсем – 475.

Участоксенчи суйлав комиссийĕсем открепительнăй удостоверенисем илнĕ – 0.

Участоксенчи суйлав комиссийĕсем суйлав кунĕнчен маларах суйлавçăсене открепительнăй удостоверенисем панă – 0.

Суйлавçăсем суйлав участокĕсенче открепительнăй удостоверенисемпе сасăланă – 0.

Усă курман (погашенные) открепительнăй удостоверенисем – 0.

**Суйлав бюллетенне кĕртнĕ регистрациленĕ кандидатсем тата вĕсем сасă пухнă:**

**Давыдов Платон Павлович – 322.**

Пыркин Георгий Миронович – 74.

Пур кандидатсене те хирĕç сасăланă – 79.

Чăваш Республикин «Чăваш Республикинче вырăнти самоуправлени органĕсене суйласси çинчен» 48 статйин 2 пункчĕпе килĕшÿллĕн суйлавçăсен чи нумай сассине пухса пĕр мандатлă 16 № Очăкасси суйлав округĕпе **Давыдов Платон Павлович** депутатсен районти Пухăвĕн депутатне суйланнă тесе йышăннă.

---

Хушма суйлавсем **Ильинка** тата **Ярославка** ял тăрăхĕсенче те иртнĕ, вĕсенче депутатсен ял тăрăхĕсен Пухăвĕсен депутачĕсене суйланă. Суйлавçăсен ытларах сассине пухса, депутатсен Ильинка ял тăрăхĕн Пухăвĕн депутатне пĕр мандатлă 11 № Вăрманкасси суйлав округĕпе **Кошкина Павлина Павловна,** депутатсен Ярославка ял тăрăхĕн Пухăвĕн депутатне пĕр мандатлă 1 № Центральнăй суйлав округĕпе **Сорокина Людмила Николаевна,** пĕр мандатлă 3 № Яргейкин суйлав округĕпе **Гришина Алиса Александровна** суйланнă.

**Республикăра**

# Чăваш Ен халăхĕн тивĕçлĕ суйлавĕ

Республика Президенчĕ Николай Федоров Министрсен Кабинечĕн членĕсемпе тата федераци ведомствисен территори органĕсен ертÿçисемпе тунти кунсерен ирттерекен йăлана кĕнĕ планеркăра Чăваш Енĕн Патшалăх Канашĕн депутачĕсен вырсарни кун пулнă суйлавĕн кăтартăвĕсене пысăка хурса хакланă.

"Пĕрлĕхлĕ Раççей" парти питĕ ĕнентерÿллĕ çĕнтерчĕ",– палăртнă Николай Федоров. Малтанхи кăтартусем тăрăх, пĕрлехи суйлав округĕ тăрăх "Пĕрлĕхлĕ Раççей" сасăсен 52 яхăн процентне пухнă. Унсăр пуçне пĕр мандатлă 22 суйлав округĕнчен "Пĕрлĕхлĕ Раççей" партин 17 представительне суйланă. Тата икĕ депутат – парти майлăскерсем, вĕсем те унта кĕме хатĕр.

Республика пуçлăхĕ пĕлтернĕ тăрăх, суйлав кăтартăвĕсене Мускавра та пысăка хурса хаклаççĕ. Вăл "Пĕрлĕхлĕ Раççей" çĕнтерĕвĕ республика ертÿçисене Чăваш Республикин аталанăвĕн çивĕч ыйтăвĕсене татса пама укçа уйăрма ыйтмашкăн май панине палăртнă. Президент Сергей Гапликов премьер-министра Патшалăх Думине тухмашкăн тивĕçлĕ ыйту хатĕрлеме хушнă. Чăваш Ен халăхĕ иртнĕ суйлавра республика Президенчĕ парти списокне ертсе пынă "Пĕрлĕхлĕ Раççее" суйласа илнине шута илсе Николай Федоров "Пĕрлĕхлĕ Раççей" партие кĕме йышăннă.

"Чăваш Ен халăхĕн çак суйлавне эпĕ пире тата эпир халиччен пурнăçланă ĕçе шанни тесе хаклатăп. Çавăнпа та çак кăтартусене çирĕплетни кăна та çителĕксĕр, пирĕн умра республика аталанăвĕшĕн кирлĕ тата пысăкрах ĕçсем", – тенĕ Николай Федоров.

Республика пуçлăхĕ мĕн пур министра "Пĕрлĕхлĕ Раççей" депутачĕсем вĕсен умне лартакан ыйтусемпе уйрăмах тимлĕ пулма хушнă. "Енчен те суйлавçăсем "Пĕрлĕхлĕ Раççей" партие, "Пĕрлĕхлĕ Раççей" депутачĕсене шанчĕç пулсан – депутатсен хăйсен суйлавçисен нушисене май пур таран çывăха илмелле", – палăртнă Президент.

Канашлура çавăн пекех ытти ыйтăва та тишкернĕ.

**Хушу**

# Техникăна – хĕллехи управа

Умра – Пукрав праçникĕ. Çак вăхăтра çĕр ĕçченĕ уй-хир ĕçĕсене вĕçленĕ май Пукрав ăшши тытма хатĕрленет. Ку ĕç-хĕл уй-хир ĕçĕсене явăçтарнă ял хуçалăх техникишĕн те паян айккинче пулмалла мар. Çапла калатпăр, ăна ăнланатпăр, анчах ĕçне тума тăрсан... Ял хуçалăх техникине хĕллехи управа лартассипе лару-тăру çулленех йывăр. Вăл ĕç ун çине пĕччен-иккĕн çеç пăхсан çăмăлланмĕ те. Çавăнпа та çĕршывра агропромышленноç комплексне аталантарассипе ĕçлекен наци проекчĕ вăй илсе пынă вăхăтра ял хуçалăх техникипе перекетлĕ те тирпейлĕ пулмалли кашни çĕр ĕçченĕ умĕнче тăракан тĕллев пулмалла: кăçал ĕçленĕ техника çитес çул та хамăрах кирлĕ-çке. Çакна шута илсе район администрацийĕн пуçлăхĕ Ю. Иванов "Ял хуçалăх предприятийĕсенче кĕрхи уй-хир ĕçĕсене вĕçленĕ май унта хутшăннă техникăна хĕллехи управа лартнине пăхма-тĕрĕслеме районта комисси тăвасси пирки" хушу кăларчĕ. Унпа килĕшÿллĕн техникăна хĕллехи управа лартассине тĕрĕслесси октябрĕн 6-мĕшĕнче пуçланчĕ. Вăл пĕр уйăх хушши пырĕ. Комиссие район администрацийĕн пуçлăхĕн пĕрремĕш çумĕ А.Н. Иванов ертсе пырать. Комисси ĕçне район хаçачĕ урлă тăтăш пĕлтерсе тăма хушнă.

**Юбилей**

## Саламлатпăр

Хаклăран та хаклă аттене, Мăн Шаптак ялĕнче пурăнакан **Александр Федорович ФЕДОРОВА** 60 çул тултарнă ятпа чун-чĕререн тухакан ăшă сăмахсемпе, ырă сунса тата хисеплесе пĕтĕм кăмăлтан саламлатпăр.

Юратнă аттеçĕм! Санăн кун-çулу вăрăм та тумхахсăр, сывлăху çирĕп пултăр. Пире, ачусене, пурнăçра йĕркеллĕ пурăнма ăс-тăн, вăй-хăват, сывлăх панишĕн тав тăватпăр сана. Çемьере яланах килĕшÿ, тулăх пурнăç пултăр, эпир сана юрататпăр, эс пурришĕн савăнатпăр.

**Пысăк салампа 3 хĕрĕ, 2 ывăлĕ, кинĕпе кĕрÿшĕсем, 9 мăнукĕ, çывăх тăванĕсем.**

---



Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхне кĕрекен Токшик ялĕнче пурăнакан **Виссарион Александрович ГОЛИШНИКОВ** октябрĕн 11-мĕшĕнче хăйĕн пысăк юбилейне паллă тăвать. Çав ятпа эпир ăна чун-чĕререн тата ăшшăн саламлатпăр, ырлăх-сывлăх, вăрăм ĕмĕр, телейлĕ кун-çул сунатпăр.

**Салампа мăшăрĕ, ывăлĕпе хĕрĕ, кинĕпе кĕрÿшĕ, мăнукĕсем.**

**Çырăнтару-2007**

**Çитес çул илсе тăма**

***Районти «Çĕнтерÿ ялавĕ» хаçата 2007 çулхи пĕрремĕш çур çулта илсе тăма çырăнтараççĕ. 6 уйăха çырăнмалли хак – 148 тенкĕ те 26 пус.***

***Хаçата вăхăтра çырăнса илме тăрăшăр.***

**Район хаçачĕн редакцийĕ.**